## **Хĕрлĕ салтак юрри**

Каçар, юратнă тусăм,
Эсĕ маншăн ан хуйхăр.
Куççуль тăкма халь, чунăм,
Вăхăт та çук... Ан макăр.
Сăмах панăччĕ пĕрре
Сана кăна юратма,
Сăмах парап халь тепре
Тăшмансене ваклама.
Мĕскĕн куçпа ăсатан...
Тетĕн: эпĕ килеймĕп.
Юлташсемпе юнашар
Вилме сăмах паратăп.
Тетĕн кайран: эс, тусăм,
Манăн шăтăка тупăн,
Ун чух мана асăнăн,
Чечексем пырса хурăн...
Сыв пул ёнтĕ, чун савни,
Маншăн ан пĕт хуйхăпа.
Тетен килĕп, пĕлместĕп...
Чуптуса юл пур вăйпа!

1919

*Ахах, И. Хĕрлĕ салтак юрри : [сăвă] // Ахах, И. Атьăр социализмшăн çапăçма / И. Ахах. – Шупашкар, 1972. – С. 50.*